## Октябрĕн 8-мĕшĕнче - ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ



**ЧР Патшалăх Канашне 8-мĕш Муркаш суйлав округĕпе депутата суйлама тăратнă кандидат**

**Евгений Николаевич АНДРЕЕВ**

*Евгений Андреев – çамрăк, финансист, хăйĕн ĕçне ертсе пырать. Пире паян шăпах маттур, пуласлăха ăнтăлакан, таса та сывлăхлă çамрăк депутатсем кирлĕ. Ялти çамрăксен те, ваттисен те нушисене вăл пуринчен лайăх ăнланать.*

*Вăл – спортсмен, спорт мастерĕн кандидачĕ. Хăйне спортăн виçĕ енĕпе: боксра, ирĕклĕ кĕрешӳре, йывăр атлетикăра тĕрĕсленĕ.*

*Евгений Николаевич – экономика ăслăлăхĕсен кандидачĕн диссертацине хӳтĕленĕ.*

*Пире паян шăпах çавăн пек депутат кирлĕ. Пушă сăмахсемпе тата хитре сăмахсемпе шантараканнисем мар, хăйĕн конкретлă ĕçĕсемпе пирĕн пурнăçа лайăх енне улăштарма пултараканшăн сасăлар. Евгений Андреев – пирĕн шанчăклă тус-юлташ тата ентеш.*

**Материал тӳлевсĕр пичетленет.**

## Райадминистрацире

# Хисеп грамотине тивĕçнĕ

Районăн ял хуçалăх отрасльне аталантарма пысăк тӳпе хывнăшăн, нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн тата çуралнăранпа 50 çул çитнĕ май район администрацийĕн пуçлăхĕн сентябрĕн 15-мĕшĕнчи 392 № йышăнăвĕпе «Моргаушская» чăхчĕп фабрики» патшалăх унитарлă предприятийĕн апат хатĕрлемелли цехĕн операторне **Леонард Леонидович ГРАЧЕВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

## Официально

**Чувашская Республика**
**Глава администрации Моргаушского района**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**

**18. 09. 2006 г. № 393 с. Моргауши**

**О внесении изменения в постановление главы администрации Моргаушского района от 18.08.2006 г. №255 “Об образовании избирательных участков по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики”**

На основании статьи 17 Закона Чувашской Республики “О выборах депутатов Государственного Совета Чувашской Республики” и ходатайства администрации Оринииского сельского поселения **ПОСТАНОВЛЯЮ:**

1. Внести изменение в постановление главы администрации Моргаушского района от 18.08.2006 г. №255 “Об образовании избирательных участков по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики” и п. 20 изложить в следующей редакции: “Орининский избирательный участок № 600. Центр – с. Оринино, место голосования – здание Орининского сельского Дома культуры. Входят: с. Оринино, дер. Лапкасы, дер.Синьял-Оринино, дер.Чамыши, дер. Падаккасы, дер. Ландыши. Телефон – 60-0-19”.

2. Направить настоящее постановление для официального опубликования в районную газету «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Глава администрации Моргаушского района**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

---

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**№ 21/334 от 16 сентября 2006 года**

**О внесении изменений в состав участковой избирательной комиссии Басурманского избирательного участка № 602 по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва**

В соответствии со ст. 22, 27 Федерального Закона “Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации”, ст. 22 Закона Чувашской Республики “О выборах депутатов Государственного Совета Чувашской Республики”, рассмотрев заявление члена комиссии с правом решающего голоса Моисеевой Г.П.,

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия решила:**

1. Удовлетворить заявление Моисеевой Галины Петровны о сложении полномочий члена комиссии с правом решающего голоса участковой избирательной комиссии Басурманского избирательного участка № 602 и вывести ее из состава участковой избирательной комиссии Басурманского участкового избирательного участка № 602.

2. Назначить членом комиссии с правом решающего голоса участковой избирательной комиссии Басурманского участкового избирательного участка № 602 Моисеева Григория Моисеевича, 07.01.1949 года рождения, водителя СПК “Оринино”, выдвинутого собранием избирателей, образование – среднее;

3. Настоящее решение направить для опубликования в районную газету «Çĕнтерӳ ялавĕ».

4. Контроль за выполнением настоящего решения возложить на секретаря территориальной избирательной комиссии Фомину В.Н.

**Председатель территориальной избирательной комиссии**
**А.В. АНДРЕЕВ.**
**Секретарь территориальной избирательной комиссии**
**В.Н. ФОМИНА.**

---

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**№ 21/335 от 16 сентября 2006 года**

**О назначении председателя участковой избирательной комиссии Басурманского избирательного участка № 602 по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва**

В соответствии с пунктом 7 статьи 28 Федерального Закона “Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации” и статьи 23 Закона Чувашской Республики “О выборах депутатов Государственного Совета Чувашской Республики”,

**территориальная избирательная комиссия решила:**

1. Назначить председателем участковой избирательной комиссии Басурманского избирательного участка № 602 по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики Мудукову Валентину Серафимовну, 16.09.1971 года рождения, фармацевта Моргаушского райпо, предложенную для назначения в состав участковой избирательной комиссии собранием избирателей.

2. Направить настоящее решение для официального опубликования в районную газету «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Председатель территориальной избирательной комиссии**
**А.В. АНДРЕЕВ.**
**Секретарь территориальной избирательной комиссии**
**В.Н. ФОМИНА.**

---

## Паянхи актуаллă ыйтупа: пай çĕрĕсем çинчен

# Ял çыннине çĕр тăрантарать е пурнăç тыткăчисĕр юлас марччĕ

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Ку ыйту хуравне хăвăрах тупма пултаратăр. Йĕркипе шутласа кайăр та. Чи малтан гражданинăн, ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕр çине тивĕçлĕ производство документчĕсем пулсан, ял тăрăхне каймалла. Çав çĕр пайне харпăрлăха куçарас тесен. Унта вăл районти “Çĕнтерӳ ялавĕнче” ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсенчен пĕрлехи харпăрлăх правин пайĕ шучĕпе çав çĕр лаптăкĕпе уйрăлма шутлани çинчен пĕлтерӳ пама ыйтса заявлени çырать. Хаçатра пĕлтерӳ тухнă хыççăн 1 уйăх иртсен, енчен те ял хуçалăхĕнче усă куракан ытти харпăрлăх правиллĕ çĕр лаптăкĕсен хуçисем е район администрацийĕ хирĕç мар пулсан, гражданин çав çĕр лаптăкне регистрацилеме кирлĕ документсене хатĕрлеме пуçлать. Район администрацине хăйĕн паспорчĕн, çĕр пайĕн производство документчĕн тата “Çĕнтерӳ ялавĕнче” пичетленнĕ пĕлтерĕвĕн копийĕсене тăратать. Район администрацийĕ 14 кун хушшинче, çав çĕр лаптăкĕ пирки нимĕнле претензи те çукки çинчен калакан справка парать. Çав çӳлерех асăннă документсемпе вара гражданин çĕр чиккине палăртассипе (межевани) ĕçлекен организацине каять. Çĕр лаптăкĕн чиккине палăртнă хыççăн ăна кадастр учетне тăратмалла. Ун хыççăн çĕр лаптăкне регистраци палатинче регистрацилемелле. Вара эсир çав çĕр лаптăкĕн харпăрлăх хуçи пулса тăратăр.

Ку вăл çак процедура пĕр чăрмавсăр чип-чипер пырать пулсан. Енчен те эсир уйрăлса тухакан çĕр лаптăкĕ пирки пĕрлехи харпăрлăх правиллĕ ытти пай хуçисем хирĕçлессĕ пулсан, эсир кĕрсе тухмалли ĕç пӳлĕмĕсем татах йышланаççĕ. Апла пулсан вăхăт татах та ытларах кирлĕ. Кун пек чухне сирĕн килĕшӳ комиссине заявлени çырса памалла. Унта уйрăлса тухакан çĕр пайĕн хуçин реквизичĕсем пулмалла: хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ, вăл ăçта пурăннин адресĕ уйрăм предпринимателĕн е юридически лицон реквизичĕсем кирлĕ пулаççĕ; хирĕç пулнин сăлтавĕ пирки тата требованийĕсене те кĕскен çырмалла; хирĕç пулнă пĕрлехи харпăрлăх правиллĕ пай хуçисен е юридически лицон ячĕпе реквизичĕсене палăртмалла).

Заявленипе пĕрле çак документсене тăратмалла килĕшӳ комиссине: çĕр пайĕ харпăрлăх правиллĕ пулнине çирĕплетекен документ; уйрăлса тухмалли çĕр лаптăкĕн схемăллă планĕ; хаçатра тухнă пĕлтерӳ; пĕрлехи харпăрлăх правиллĕ пай хуçисен çав çĕр лаптăкĕнче чикĕлеме хирĕç пулнине çирĕплетекен пĕрлехи пуху йышăнăвĕ, пĕрлехи харпăрлăх правиллĕ пай хуçисем сирĕн çĕр лаптăкĕн вырăнĕпе килĕшменни çинчен çырса пĕлтерни тата мĕншĕн килĕшменнин сăлтавĕсене çырса палăртни кирлĕ.

Енчен те çак документсене заявленипе пĕрле тăратмасан, заявленине пăхса тухмаççĕ.

Куратăр-и ĕнтĕ халь çĕр пайне харпăрлăха куçарасси пĕр кунлăх ĕç маррине.

Районĕпе харпăрлăх правиллĕ пай хуçисем пурĕ 15079. Иртнĕ эрне кун тĕлне çав çĕр пайĕсем кирлĕ тесе заявлени çыракансем 4048ăн çеç пулнă. Тепĕр 11031ĕн хуçисем ыйхăран вăранса çĕр пайĕллĕ пулма чупкалама пуçличчен вăхăт вăшт! çеç шăхăрса иртсе кайма пултарать. Çĕр кирлĕ тесе шутланă 4048 çыннăн та тивĕçлĕ черетлĕ процедурăсем витĕр тухассине хăвăртлатмалла. Вĕсенчен. 1951 çеç хаçатра пĕлтерӳ пичетленĕ, çав йышран 1320шĕ межевани тунă, ку йышран, 277шĕ кадастр учетне тăнă. Пĕтĕмпе 114 пĕтĕм кирлĕ документсене регистраци палатине тăратнă. Урăхла каласан халлĕхе шăп 114 çын паян-ыран хăйсен çĕр пайне харпăрлăха куçарса çитерет.

20-30 çул каялла эпир çĕре хакласах кайман. Паян вара пурнăç тĕпренех улăшнчĕ. Çĕр хресченĕн пурнăç тыткăчи пулнине ăнланма пуçларăмăр. Килĕшмелле: ĕçлемесĕр, тар тăкмасăр çĕр çинче çĕр улми те, купăсти те çитĕнмест. Анчах та çĕр çинче вăй хума ӳркенмен çын, чăннипех те, халиччен выçă ларни пулман-ха. Кунта манăн пĕр-ик тĕслĕх илсе кăтартас килет. Астăватăп-ха, темиçе çул каяллах хулари магазинтан Шупашкарта пурăнакан ватă çын 200 грамм кишĕр, çур килограмм çĕрулми туяннине. Тĕрĕссипе каласан, çӳçенсе кайрăм. Пирĕн ялта пурăнакансен шултра çĕрулми пĕтсен те, вĕтĕреххи пулать. Çĕр лаптăкĕ пур çыннăн хĕлĕпех путвалта пахча-çимĕçĕ те, унран хатĕрленĕ çимĕçсем те çăва тухиччenех çитеççĕ. Ялти çын килти хушма хуçалăхпа майне-шывне тупса пурăнать.

Чăннипех те, пĕр Шупашкарти пĕлĕш калашле, хулара кĕсьере укçа çук пулсан, троллейбус çине те лараймастăн. Эпир ялта пурăнакансем, тем тесен те, телейлĕрех ку енĕпе. Кĕсьере укçа пĕтсе çитсен те мăнаçлăн ĕçе утатпăр. Каçхине ачасене мĕн çитерес-ши темелле мар. Çĕр пур-тăк, çимĕç те пур. Укçа çăлкуçĕ пур пирĕн.

– Эп хулара ирпе макарон, кăнтăрла макарон, каçхине макарон çисе пурăниччен луччĕ ялта пыршă тухса каиччен ĕçлетĕп, - терĕ пĕр çамрăк хĕрарăм.

Ку сăмах пирĕншĕн кашнишĕн çывăх пулĕ. Шăп çакăн пек ĕçленипе ĕнтĕ ял çынни паян пурăнать, ачипăчине çитĕнтерет, малалла вĕрентет. Çав ĕçлемелли вырăнĕ çеç çĕр лаптăкĕ пултăрччĕ. Апла пулсан, малалла та шанчăкпа ĕçлеме пуçăнас тетпĕр пулсан, çĕр пайĕсене харпăрлăха куçарса юласчĕ. Хамăр çĕр пайне харпăрлăха куçарас тесен, хамăрăнах çӳремелле. Çапла тума ӳркенсе, паян тăвас ĕçе ырана хăварса, хамăра малашлăхсăр, ачасене те шанчăксăр хăварас марччĕ. Çĕр пайĕсĕр, апла пулсан укçа çăлкуçĕсĕр, пурнăç тыткăчисĕр хăварас марччĕ.

**Халĕ çак таблицăна пăхăр та тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тăвăр:** çĕр пайне харпăрлăха куçарас ĕç йывăррăн та пулин малаллах каять пулсан, “Оринино” ял тăрăхĕн территорийĕнче палăртнă вăхăтра лав вырăнтан тапранман çеç мар, ку тĕллевпе лашине кӳлмен.

Çак цифрăсемпе паллашни, тен, хамăршăнах кирлĕ çак ĕçе хăвăртлатма хистĕ?

**Л. ПАВЛОВА.**

| № | Ял тăрăхĕсем | Ял хуçалăх предприятийĕсем | Пĕтĕмпе пай çĕрĕсем | Кирлĕ тесе заявленисем çырнă | Заявленисем çырман | Хаçатра пĕлтерӳсем пичетленĕ | Межевани тунă | Кадастр учетне тăратнă |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | Уйкас Янасал | Ильич яч. хис. | 682 | 540 | 142 | 104 | 7 | 7 |
| 2 | Мăн Сĕнтĕр | «Сундырский» | 729 | 95 | 634 | 92 | 74 | 31 |
| | | «Нива» | 565 | 295 | 270 | 125 | 125 | 6 |
| 3 | Ильинка | «Хлебороб» | 872 | 100 | 772 | 76 | 3 | 2 |
| | | «Волга» | 601 | 174 | 427 | 88 | 38 | 16 |
| 4 | Катькас | «Колос» | 890 | 280 | 610 | 279 | 251 | 40 |
| 5 | Оринин | «Оринино» | 740 | 107 | 633 | | | |
| | | «Восток» | 247 | 52 | 195 | | | |
| 6 | Çатракасси | К.Иванов яч. хис. | 748 | 53 | 695 | 33 | 31 | 28 |
| 7 | Турай | Суворов яч. хис. | 782 | 85 | 697 | 10.05 | 27 | 12 |
| | | «Тораево» | 720 | 140 | 580 | 30 | 8 | 4 |
| | | «Динамо» | 309 | 88 | 221 | 88 | 21 | 3 |
| 8 | Хорнуй | Ленин яч. хис. | 795 | 782 | 13 | 61 | 29 | 11 |
| 9 | Чуманкасси | Чапаев яч. хис. | 946 | 224 | 722 | 223 | 223 | 7 |
| | | Чкалов яч. хис. | 377 | 61 | 316 | 61 | 56 | 23 |
| 10 | Шетмĕпуç | Мичурин яч. хис. | 966 | 153 | 813 | 150 | 149 | 36 |
| 11 | Юнкă | «Юнга» | 1304 | 135 | 1169 | 101 | 84 | 18 |
| 12 | Ярапайкасси | «Дружба» | 962 | 132 | 830 | 82 | 11 | 11 |
| | | «Герой» | 550 | 383 | 167 | 325 | 161 | 17 |
| 13 | Ярославка | «Сеятель» | 765 | 56 | 709 | 56 | 9 | 3 |
| | | «Чемеево» | 529 | 113 | 416 | 113 | 13 | 2 |
| Пĕтĕмпе | | | 15079 | 4048 | 11031 | 1951 | 1320 | 277 |